57-211
23 сентября 57 г.
6646

Е. АНДРЕЕВ,
колхоз председателӗ

КОЛХОЗРА СЫСНАСЕМ САМӐРТНИ

(Муркаш районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхозӑн ӗҫ опычӗ)

Пирӗн колхозри колхозниксем ялхуҫалӑхне хӑвӑрт вӑйлатас тӗлӗшпе партипе правительство йышӑннӑ решенисене пурнӑҫлассишӗн активлӑ кӗрешӗве хутшӑнчӗҫ.

Аш-какай туса илессине кӗске срокра ӳстерес тесе, эпир сысна ӗрчетесси ҫине тимлӗ пӑхма пуҫларӑмӑр. Сысна ӗрчетессине аталантарасси—выльӑх-чӗрлӗхӗн тупӑшлӑ отраслӗ. Ку тӗлӗшпе 1956 ҫулта пирӗн колхоз чылай пысӑк ҫитӗнӳсем турӗ. Тырпул акакан кашни 100 гектар ҫӗр пуҫне 29,5 центнер сысна ашӗ туса илнӗ. Туса илнӗ пӗтӗм аш-какай хисепӗнчен 59,4 процент сысна ашӗ шутланать. Вӑтамран кашни сысна аминчен 25,4 ҫура илнӗ, ҫулталӑкра 772 сысна самӑртнӑ, вӗсен кашни вӑтам йывӑрӑшӗ 70 килограмм пулнӑ. Сысна ӗрчетнинчен илнӗ укҫа-тенкӗ тупӑшӗ те ӳсрӗ. 1955 ҫулта сысна ӗрчетсе 538 пин тенкӗ тупӑш илнӗ пулсан, 1956 ҫулта вӑл 587 пин тенке ҫитнӗ, урӑхла каласан, 49 пин тенкӗ ӳснӗ. Кашни сысна ами 9047 тенкӗ тупӑш тата 8,2-шер центнер сысна ашӗ панӑ.

Пирӗн сысна ферми ял ҫывӑхӗнче, сӑртлӑрах, сивӗ ҫилсем тивмен вырӑнта вырнаҫнӑ.

Колхозсене пӗрлештерсе пысӑклатнӑ хыҫҫӑн 6 ҫул хушшинче сысна амисем валли 2 вите, ҫурасене ӳстермелли тата сысна самӑртмалли 3 вите турӑмӑр. Фермӑра столовӑй, апат хатӗрлемелли кухня, сысна ферминче ӗҫлекенсем валли общежити тата апат усрамалли темиҫе склад пур.

Сысна ферминче ӗҫлекенсем сысна кӗтӗвне лайӑхлатас тӗлӗшпе пысӑк ӗҫсем туса ирттерчӗҫ. Эпир шурӑ шултра тата «цивильская породная группа» текен сыснасене ӗрчететпӗр.

Паха сысна ашӗ туса илессишӗн тӑрӑшса, эпир ӗҫ мӗн чухлӗ усӑ панине шута илтӗмӗр. Иртнӗ ҫулсенчи опытсене вӗренсе тата пӑхса тухса сысна ӗрчетекенсем юлашки ҫулсенче сыснасене самӑртас ӗҫе кӗскетме тата вӗсене хӑвӑртрах самӑртмалли меслетпе усӑ курма пуҫларӗҫ. Сыснасене хӑвӑртрах самӑртассине тӗрӗс йӗркелес шутпа, сысна амисене хӑҫан ҫурлаттарасси, ҫурасене пӑхса ӳстересси тата ҫурасене суйласа илесси ҫине уйрӑмах тимлӗ пӑхатпӑр.

Сысна амисене хӑҫан ҫӑвӑрлаттарассине йӗркелени пысӑк выръан йышӑнса тӑрать. Пирӗн пӗтӗм сысна амисем ҫулталӑкне икӗ хут ҫӑвӑрлаҫҫӗ: пӗрремӗш хут — январьпе февральте, иккӗмӗш хут — июльпе августра. Эпир сыснасене мартпа апрельте тата кӗркунне ҫуралама памастпӑр, мӗншӗн тесен ҫак вӑхӑт ҫурасене аталанма юрӑхлах мар.

Сысна ашӗ туса илессине ӳстерес тата тӑкаксене чакарас тесе, эпир сысна амисене малтанхи хут ҫуралана хыҫҫӑн пӗрремӗш уйӑхрах чуптарма тӑрӑшатпӑр. Ҫавӑнпа сысна амисене паха апат ҫитеретпӗр. Апат рационне клевер утти, пулӑ ҫӑвӗ, пурӑ тата тӑвар кӗртетпӗр.

Сысна амисене икӗ-виҫӗ ҫул ытларах усрани усӑллах мар, мӗншӗн тесен вӗсем аталанма пӑрахаҫҫӗ тата виҫине те хушмаҫҫӗ. Усрама, лайӑх ӗрчекен, сӗтлӗрех тата хӑвӑрт ҫитӗнекен сыснасен ҫурисене хӑваратпӑр.

Сысна амисемшӗн тӑрантнисӗр пуҫне, уҫӑлтарса ҫӳретни пысӑк выръан йышӑнса тӑрать. Эпир вӗсене кашни кун икӗ хут уҫӑлтарма кӑларатпӑр, самӑртакан сыснасене уҫӑлтарма кӑлармастпӑр. Вӗсем ытларах апат ҫиччӗр тата лайӑх канччӗр тесе, чӳречесене хуплатпӑр.

Сысна ҫурисене пӑхса усрасси тата ӳстересси ҫине эпир питӗ тимлӗ пӑхатпӑр. Пӗр эрнери ӗмекен ҫурасене урӑх апатсем: ӗне сӗчӗ малтан 30—40-шер грамм, унтан 250 грама яхӑн хушса тӑрантаратпӑр. Кунсӑр пуҫне тата минераллӑ апатсем паратпӑр. Ӑшаланӑ тӗштырӑ ҫиме хӑнӑхтаратпӑр.

Вунӑ куна ҫитнӗ ҫурасене сӗтеклӗ апатсем, пӗҫернӗ ҫӗрулми ҫӑнӑх сапса пама тытӑнатпӑр.

Ҫирӗм куна ҫитнӗ ҫурасене шӗвӗ тата хытӑ апатсем, клевер утти е симӗс клевер паратпӑр.

Пӗр уйӑхри ҫурасем пирӗн пур апатсене те — шӗввисене те тата хыттисене те ҫиеҫҫӗ. Сысна ҫурисен апат ирӗлтерекен органӗсене ҫамрӑклах ҫирӗплетни питӗ паха выръан йышӑнса тӑрать. Пирӗн сысна ҫурисем пачах тенӗ пекех вилмеҫҫӗ.

Амӑшӗсенчен уйӑрнӑ вӑхӑтра сысна ҫурисем 18—20 килограмм туртаҫҫӗ.

Кашни сысна аминчен сывӑ, лайӑх аталаннӑ, апата лайӑх ҫиекен ҫичшер ҫура хӑваратпӑр, ыттисене виҫӗ эрнерен сутатпӑр.

Икӗ уйӑх иртнӗ хыҫҫӑн, урӑхла каласан, амӑшӗсенчен уйӑрсан, самӑртмалли ҫурасене ӳсме урӑх пӳлӗме куҫаратпӑр. Кунта вӗсене виҫӗ уйӑха ҫитиччен кашни пӳлӗме 25—30-шар ҫура вырнаҫтаратпӑр, унтан самӑртма тепӗр пӳлӗме хупатпӑр.

Сыснасене самӑртнӑ чухне апата ҫирӗп йӗркепе ҫитерни тата тасалӑх пысӑк выръан йышӑнса тӑрать. Паллах ӗнтӗ, ҫамрӑк выльӑхсен хырӑмлӑхӗ пысӑках мар, унта апат нумай вырнаҫаймасть; ҫавӑнпа та амӑшӗнчен уйӑрнӑ ҫурасене кунне пилӗк-ултӑ хут апат паратпӑр. Рацион тӑрӑх сысна ҫурисене амӑшӗнчен уйӑрнӑ хыҫҫӑн кунне 1 килограмм вӗтетнӗ сӗлӗпе пӑрҫа, 2 килограмм ҫӗрулми, 1 литр хӑймине илнӗ сӗт тата клевер утти ҫитеретпӗр.

Тӑватӑ уйӑха ҫитнӗ ҫурасене кунне 1 килограмм вӗтетнӗ сӗлӗпе пӑрҫа, 4 килограмм ҫӗрулми, 1 литр хӑймине илнӗ сӗт тата 1—2 килограмм клевер утти паратпӑр.

Ултă уйăхри çурасене концентратлă апатсем ытларах паратпăр, çĕрулми 6 килограма яхăн çитеретпĕр, минераллă тата апат антаракан апатсем паратпăр; кашни тăрантарнă хыççăн пӳлĕмри пек ăшă чухлĕ таса шыв ĕçтеретпĕр.

Икĕ уйăхран пуçласа тăватă уйăхри çурасем кунне вăтам шутпа 400-шер грамм ытла, тăватă уйăхран пуçласа ултă уйăхрисем 500—550 грамм, хăвăрт самăртнă вăхăтра 600—700 грамм ытла хушăнса пыраççĕ.

Ялан тенĕ пекех сыснасене эпир государствăна паратпăр е пилĕк-ултă уйăхран вĕсен чĕрĕ виçи 85—90 килограма çитсен, сутуилӳ организацисене сутатпăр. Сыснан чĕрĕ виçине пĕр килограмм хушма 1956 çулта 4,5—4,7 апат единици пĕтернĕ. Пĕр центнер сысна ашĕ туса илме 18,31 ĕçкунĕ тухнă.

Сыснасене самăртма эпир январьпе февральте çурланă çурасене хăваратпăр, вĕсем çулла кĕтӳре лайăх ӳсеççĕ, кунсăр пуçне тата апат хатĕрлеме тухакан расходсем чакаççĕ, вĕсене пăхма çăмăлтарах пулать. Самăртма хупнă пур сыснасене те çулла ешĕл клевер çитеретпĕр. 1957 çултан сыснасене çулталăкĕпех тăрантарассине йĕркелеме йышăнтăмăр, çавăнпа тĕп амасенчен январьти çурасемпе, пĕрремĕш хут çуралакан ама сыснасен май уйăхĕпе июнь уйăхĕнчи çурисемпе тата тĕп амасен июльпе августри иккĕмĕш хут çурланă çурисемпе усă курма шутлатпăр.

Пирĕн колхозра çĕрулми нумай хатĕрлеççĕ, сыснасене тăрантаракан апат хисепĕнче вăл пысăк вырăн йышăнса тăрать. 1956 çулта сыснасем валли 6000 центнер çĕрулми, 1200 центнер тĕштырă тата 80 центнер лайăх клевер утти хатĕрленĕ.

Практика çакна кăтартса парать: сысна ашĕ ытларах туса илес ĕçре çамрăк сыснасене пĕрремĕш хут çурлаттарни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Мĕнпур çурасенчен 20 процентне пĕрремĕш хут çурлаттарнă сысна амисенчен илни пирĕн колхоза сысна ашĕ туса илессине ӳстерме тата тăкаксене чакарма май пачĕ.

Пысăк тухăçлă сыснасене ĕне фермисĕр ĕрчетме пулмасть. Сĕт сысна çурисене те, çамрăк сыснасене те кирлĕ.

Иртнĕ çулта сысна фермине тытса тăма 70 пин литр хăймине илнĕ сĕт расходланă, унпа сысна çурисене тата сыснасене самăртма усă курнă.

Çитес хуçалăх çулĕнче колхозри сысна ĕрчетекенсем тырпул акакан кашни 100 гектар çĕр пуçне 400 центнер сысна ашĕ туса илессишĕн кĕрешеççĕ.

Сталин ячĕпе тăракан колхоз Октябрьти Аслă социализмла революци 40 çул тултарнă тĕле усă куракан кашни 100 гектар çĕр пуçне 70 центнер аш илме обязательство йышăнчĕ.

Отв. за выпуск *Р. ФИЛЬЧЕНКО*

НТ 00666. Подп. к печати 15/VII-1957 г. Заказ № 1703. Тираж 2 000 экз.
Объем 0,25 печ. лис. Цена 5 коп.

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР.
г. Чебоксары, Володарского, 5, Дом печати.